

*Пирĕн ентеш — Чăваш халăх художникĕ Э. М. Юрьев çуралнăранпа 70 çул çитрĕ.*

# Унăн ячĕ — халăхра

КĔСКЕ СПРАВКА. Элли Михайлович Юрьев 1936 çулхи мартăн 25-мĕшĕнче Кĕçĕн Шетмĕ ялĕнче çуралнă. 1964 çулта Тбилисири патшалăх ÿнер академийĕнчен вĕренсе тухнă. Чăваш кĕнеке издательствинче, Шупашкарти ÿнер училищинче, педагогика институтĕнче, телевиденире, университетра ĕçленĕ. Нумай-нумай произведени, çавăн пекех Чăваш Республикин патшалăх Гербĕпе Ялавĕн авторĕ. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ, Чăваш халăх художникĕ, ЧР К. В. Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ, Пĕтĕм Раççейри геральдика обществин Хисеплĕ членĕ. 2001 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче вилнĕ.

**В. ДАНИЛОВ**

Манмаççĕ Э. М. Юрьева Чăваш Енре: ун ячĕпе Шупашкарти пĕр урампа ÿнер шкулĕ хисепленеççĕ. Вăл ĕçленĕ мастерской вырнаçнă çурт çине асăну хăми вырнаçтарнă. Район пуçлăхĕн С. А. Николаевăн хушăвĕпе вара кăçал Кĕçĕн Шетмĕре Э. М. Юрьев ячĕллĕ музей уçăлмалла.

Ентешĕн çуралнă кунĕнче — мартăн 25-мĕшĕнче Кĕçĕн Шетмĕри кану центрĕнче ăна халалланă каç йĕркелерĕç. Мероприятине Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ О. Андреева уçрĕ. Чăваш Гимнĕ янăранă хыççăн пухăннисем Э. М. Юрьева асăнса пĕр минут шăп тăчĕç.

Элли Михайловичăн пултарулăхне пысăка хурса хакласа, каçра район пуçлăхĕн çумĕ Н. Антонов сăмах каларĕ, хамăр тăрăхра ун ячĕллĕ музей уçни халăх ÿнерсин ырă ĕçне малалла тăсни пулнине палăртрĕ.

Каçра çавăн пекех Чăваш патшалăх ÿнер музейĕн пай заведующийĕ М. Карачарскова, Э. М. Юрьев мăшăрĕ — Галина Алексеевна, И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн художествăпа графика факультечĕн профессорĕ Ю. Викторов, Э. М. Юрьев ячĕллĕ музей директорĕ Ю. Дубров, Шупашкарти "Трак ен" ентешлĕх ертÿçи А. Львов, ЧР халăх художникĕ К. Владимиров, Чăваш наци конгресĕн представителĕ В. Тимофеев, районти Н. Янкас ячĕллĕ пĕрлĕх правленийĕн председателĕ Н. Ершов, Кĕçĕн Шетмĕ тăрăхĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ Н. Семенов, Шетмĕ Михали сăвăç сăмах каларĕç, Элли Михайлович пирки аса илнисемпе паллаштарчĕç, музей валли парнесем пачĕç.



(Сулахайран сылтăмалла) Ю. Викторов искусствовед, Э. М. Юрьев мăшăрĕ — Галина Алексеевна тата Чăваш патшалăх ÿнер музейĕн пай заведующийĕ М. Карачарскова

Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ О. Андреева хăнасене каçа пуçтараннăшăн, ентеш пултарулăхĕ çинчен ăшă сăмахсем каланăшăн тав турĕ. Каç район Гимнĕпе вĕçленчĕ. Ăна Кĕçĕн Шетмĕри кану центрĕн директорĕ, ЧР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В. Петрова йĕркелесе пычĕ. Пухăннисем кунпа пĕрлех ялти вăтам шкулти "Путене" ушкăн, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ В. Петров ячĕллĕ конкурс лауреачĕсен Саша Никитинпа Олеся Сергеевăн, халăх пултарулăхĕн районти çуртĕнче ĕçлекенсен юрăри пултарулăхне курса хакларĕç.

Кану центрĕн методика пÿлĕмĕнче — Э. М. Юрьев ĕçĕсен, фойере "Чăваш Республикин патшалăх символĕсем. Истори тата хальхи" выставкăсем ĕçлерĕç. Чăваш халăх художникĕ К. Владимиров (вăл хамăр районти Нимĕчкасси ялĕнче çуралнă) музее Э. Юрьевăн мăшăрĕн — Галина Алексеевнан портретне парнелерĕ. Ю. Васильев искусствовед хăйĕн "Элли Юрьев. Художник и время" кĕнекипе паллаштарчĕ.



Паллă ÿнерçĕ мăшăрĕ — Галина Алексеевна Шетмĕ Михали поэта лайăх сăвăшăн тав тăвать



Г. А. Юрьев тăванĕсене мăшăрĕ пирки çырнă кĕнекене парнелет

И. Ананьевапа В. Данилов сăн ÿкерчĕкĕсем.

**Николай ЕРШОВ**

## ЭС ПИРĔНПЕ ПĔРЛЕХ

*Чăваш халăх художникне — вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Элли Юрьева асăнса, çурални 70 çул çитнĕ май*

Тăван ялта — сан ĕçÿсен куравĕ...
Çав ĕçсенче — пайтах килленмелли.
Халь çапларах ял-йышăмăр хуравĕ:
Эс яланах аса килен, Элли!

Паян кунта юлташусем мĕн чухлĕ...
Пулман нихçан сана çилленмелли.
Сан кăмăлна кам ăнланать — вăл чухлĕ:
Эс яланах аса килен, Элли!

Ÿнер тĕнчи ăс-хакăлна çĕклерĕ...
Пачах та çук сана кÿренмелли.
Чăваш тĕнчи пĕр саншăн ĕсĕклерĕ:
Эс пирĕнпе пĕрлех çÿрен, Элли!

Сан талантна эпир куспа куратпăр...
Чăнах та пур санран вĕренмелли.
Эппин кашни чĕрепеле туятпăр:
Эс пирĕнпе пĕрлех çÿрен, Элли!